ПĔТĔМĔШЛЕ ПĔЛӲ ПАРАКАН ХУРАКАССИ ВĂТАМ ШКУЛĔ

# ХУНАВ

Юпа уйăхĕ, 2024

## Пĕрремĕш утăмсем

***Хисеплĕрен те хисеплĕ, юратнăран та юратнă вĕрентекенсем!***
***Сире Вĕрентекен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Сывлăхăр çирĕп пултăр, хавхаланăвăр ан иксĕлтĕр, вĕренекенĕрсем савăнтарсах тăччăр! Пархатарлă ĕçĕр киленӳ, хисепре сум кӳтĕр!***

Хăй тытăмлăх кунĕ иртрĕ

Вĕрентекенсен уявĕ ячĕпе ирттернĕ хăй тытăмлăх кунĕ, ман шутпа, пурне те килĕшрĕ: вĕрентекенсене те, вĕренкенсене те, вĕрентекенсене улăштаракансене те. Дублер учительсем хăйсене шанса панă тивĕçĕсене тăрăшса туса пычĕç. Вĕсем пĕтĕм яваплăха туйса уроксенче тĕрлĕ мелпе усă курчĕç, тĕрлĕрен ĕç тутарттарчĕç. Пирĕн класра ирттернĕ уроксем лайăх та питĕ интереслĕ иртсе кайрĕç.

Вĕрентекен ĕçĕ çăмăлах мар иккен. Çакна дублер учительсем те, ытти вĕренекенсем те аванах туйрĕç çак кун. Урок ирттерме пĕлӳ те, хăвна тыма пĕлни те, чăтăмлăх та, ăсталăх та, тăрăшулăх та кирлĕ. Çавăнпа та эпир хамăрăн юратнă вĕрентекенсене пуриншĕн те чунтан тав тăватпăр.

Тихонова Татьяна,
7-мĕш класс




Хăй тытăмлăх кунĕ мана та питĕ килĕшрĕ. Эпĕ кашни урокрах ал тăратса хуравлама тăрăшрăм, лайăх паллăсем илтĕм. Уроксем хыççăн ачасем учительсене концерт лартса пачĕç. Эпир вара таксемпе саламларăмăр. Манăн хамăрăн вĕрентекенсене питĕ пысăк тав сăмахĕ калас килет пире тăрăшса пĕлӳ панăшăн.

Данилов Данил, 6-мĕш класс

Çак кун пирĕн класс ертӳçи 9-мĕш класра вĕренекен Андреева Полина пулчĕ. Вăл пирĕнпе кунĕпех пĕрле пулчĕ, пирĕн ыйтусем пулсан вĕсене татса пама тăрăшрĕ, пур енчен те пулăшса пычĕ. Тăвата урок пирĕншĕн сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Вĕрентекен кунĕ ячĕпе эпир хамăра кĕçĕн классенче вĕрентнĕ учителе те ăшă сăмахсем каласа саламларăмăр. Çак кун мана питĕ килĕшрĕ, асра юлчĕ

Плотникова Мария,
5-мĕш класс




Тĕп редактор – Тихонова Татьяна
Редактор çумĕ – Андриянова Полина